**АСТĂВĂМ**




# Çапăçура – паттăрлăхпа, ĕçре хастарлăхпа палăрнă

**Шупашкарти Çар мухтавĕн музейĕнче «Элĕк районĕн мухтавлă салтакĕсем» курав уçăлчĕ.**

Çамрăксене çарпа патриот воспитанийĕ парас тĕллевпе Шупашкарти Çар мухтавĕн музейĕнче 2017 çулхи нарăс уйăхĕнче Паттăрлăх уйăхлăхĕ иртрĕ. Çак тапхăрта музей ĕçченĕсемпе пĕрле Чăваш наци конгресĕн культура комитечĕн хастарĕсем шкул ачисемпе тĕлпулусем йĕркелерĕç, уроксем иртерчĕç. Уйăхлăх вăхăтĕнче кунта «Элĕк районĕн мухтавлă салтакĕсем» курав уçăлчĕ. Экспозици Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçламăшĕнчен вĕçне çити çапăçса киле тавăрннă икĕ çын шăпипе паллаштарать. Куравра фронтовиксен вăрçă вăхăтĕнчи тата хальхи пурнăçĕ сăнланнă. Кунтах вăрçăри тата мирлĕ пурнăçри мăшăрĕсемпе, ачисемпе çапăннă сăнÿкерчĕксем, салтак çырăвĕсем, документсем, нимĕç карттисем тата ытти те.

Элĕк ентешлĕхĕн хастарĕсенчен пĕри – Геннадий Егоров полковник – хăйĕн ашшĕ пирки ăшшăн аса илчĕ. Аристарх Егоров Элĕк районĕнчи Янкурасра çуралса ÿснĕ. Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнче вĕреннĕ. Каярахпа кĕçĕн политруксен, унтан командирсен тата штабсен пуçлăхĕсен аслă офицерсен курсĕсенче ăс пухнă. Хĕрлĕ Çарта хĕсметре тăнă, финсемпе çапăçнă çĕре хутшăннă. Батарея политрукĕ пулнă май Ленинград çывăхĕнчи тата Байкал леш енчи-Амур фронтĕнче яппунсемпе паттăррăн çапăçнă, Корейăра дивизи штабĕн пуçлăхĕ пулнă.

Чăваш наци конгресĕн хастарĕ Вера Архипова пухăннисене ашшĕн пурнăçĕнчи чи кăткăс самантсем çинчен каласа кăтартрĕ. Элĕк районĕнчи Тури Вылара çуралса ÿснĕ Севастиан Архипов Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пĕтĕм халăхпа пĕрле паттăррăн çапăçнă. Вăл Харьков, Луцк, Лубка, Белгород хулисене хÿтĕленĕ, Хĕвелтухăç Европăра тăшмана аркатнă çĕре хутшăннă, Курск пĕккинче тăшманпа кĕрешнĕ. Вăрçă çулĕсенче ăçта кăна илсе çитермен пулĕ ăна шăпа. Польшăн Рашкоф /1944/, Скальмежиценово /1945/ хулисенче çар коменданчĕ пулнă. Виçĕ хутчен аманнă. Паттăрлăхпа хăюлăхшăн I тата II степень Тăван çĕршыв вăрçин орденне, Хĕрлĕ Çăлтăр, Жуков орденĕсене тивĕçнĕ. «1941-1945 çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Германие çĕнтернĕшĕн» тата ытти 13 медаль те унăн кăкăрĕ çинче çуталнă. Вăрçă хыççăн Севастиан Михайлович 50 çул ытла вĕрентÿ тытăмĕнче ĕçленĕ. Çĕмĕрле районĕнчи Юманай шкулĕн ĕçне йĕркелесе ярас енĕпе сахал мар тăрăшнă. Çак шкул паян та республикăра – вĕренÿ чи лайăх учрежденийĕсенчен пĕри.

Шкул ачисемшĕн, вĕрентекенсемшĕн Астăвăм касĕ питĕ интереслĕ пулчĕ. Мероприятие Çар мухтавĕн музейĕн ертÿçи Тамара Федулова, офицерсен пĕрлешĕвĕн пайташĕ, Тури Выла çынни Анатолий Павлов, писатель, Чăваш журналисчĕсен союзĕн Çемен Элкер ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ Петр Сидоров хутшăнчĕç. Çар Мухтавĕн музейĕн ĕçченĕ, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Светлана Асамат ачасемпе пĕрле çар юррисене шăрантарчĕ. Çакнашкал мероприятисем çамрăк ăрăва патриотизм тата кăмăл-сипет воспитанийĕ парас, Тăван çĕршывăн чăн-чăн хÿтĕлевçисен йышне кĕрес ĕмĕтне вăйлатма пулăшаççĕ.

**Вера АРХИПОВА,**
**ЧНК культура комитечĕн председателĕ.**

ЧНК архивĕнчи сăнÿкерчĕксем.